Пӗтӗм тӗнҫери пролеттарисем, пӗрлешӗр!

# КАПКӐН

3-мӗш № Йанваршӗн 1928 ҫ. 3-мӗш ҫул тухаҭ.

## Киревсӗр ӗмӗт сӳнҫӗ.



**Кулак.** Кам шуйттанӗ шухӑшласа кӑларнӑши ҫав Совет суйлавӗсене кӗркуннене хӑварма. Ҫистах сайа карӗҫке ӗнтӗ манӑн йалканаш претҫетаттӗлне кӗрес шухӑшпа тунӑ 4 ҫетвӗрт ханша.

# Ҫăварнири шуйттансем.

Ӡипер хиртен ӡипер арăм туса йанă ӡипер арăмпа, ват ассаттесен йăлипе, ҫăварнире хунеме карӡăк патне карăмăр. Хăналарĕҫ лайăх. Алтăрпа та ĕҫрĕмĕр сăрине, ҫийес килмесен те ҫирĕмĕр йĕкерӡине. Ĕҫни-ҫини ҫăвартан тухма пуҫласан, туртасене килелле ҫавăртăмăр. Ҫăварни ҫуни ҫут ҫуни пит те лайăх шăваҫ килелле. Уҫă сывлăшпа йурă шăранаҫ. Пăт-пат ҫăлтăрсем ӳсĕртереххĕн пăхаҫҫĕ.

Ҫын пек ларакан тĕмескесем патĕнӡен иртсе карăмăр, ҫырма урлă каҫрăмăр. Шыв армавĕ курăнӡĕ. Пĕве урлă каҫмалла. Хăрушă арман пĕви урлă каҫма. Шуйттан ҫуна ҫине пырса ларассăнах туйăнаҫ.

Хам шикленнине арăма систерместĕпха. «Ыр ĕҫрĕмĕр-ҫирĕмĕр, ниҫта намăс курмастпăр, тесе мăн сасăпа йурласа пыратăп (хăранине арăм сисесрен).

Арăм аҫам ҫаннинӡен йаӡĕ тытрĕ сасартăк:

— Иакăнат, Иакăнат!..—Мăн турăн мăн тур амăшĕ, ҫăлах!.. Пăх—шуйттан пур. Пĕтрĕмĕрех!—тет.

Пăхатăп малалла—пит-куҫ ҫуталсах карĕ. Пыраҫ пире хирĕҫ шуйттан. Ҫӳӳллĕ, ҫилхисем хура, куҫĕсем, епĕр сăра ĕҫнĕ алтăр пек, йалкăшаҫҫĕ анӡах. Ах, турă!.. Сăхсăхса илтĕм те, ну тапратрăм лашана иушăпа илме. Лаши ҫамрăк, шухă, тапранса карĕ, ӡуҫ-ӡуҫ вăркăнса йулаттăмӡĕ ҫуна ҫинӡен. Шуйттан ҫинех пырса кĕтĕмĕр. Иртсе карăмăр шуйттанран сиккипе,—тата тепĕр шуйттанĕ тухрĕ. Малтанхинӡен пĕӡĕкрех. Малтанхи пекех хупхура хăй. Пуҫĕ шапшурă, йур пек, аллинӡе ӡукмар. Ӡукмар тытнă аллипе.

Воспоти тур! Тытăнтăм лашана ăшалама. Киле ҫитиӡӡенех ăшаласа пытăм. Пăрҫа пек тарсем йухаҫҫĕ хамăн пит тăрăх.

Иамăкăм:

— Мĕн пушар пулнă пек шаккатăн алăка! Лаши вилес пек хашкаҫ. Ара апла... Арăму ăҫта тата, тет.

Пăхатăп ҫуна ҫине—арăм ҫук.

— Иамăкăм, тетĕп.—Арăма шуйттансем илсе йулнă. Арăмсăр мĕнле пурăнас ĕнтĕ.

Ĕсĕклесе йĕрсе пĕр сехете йахăн выртнă хыҫҫăн, хăйă сӳнтерме тытăннăӡӡĕ, ӡӳреӡерен тăпăртаттарма та пуҫларĕҫ.

— Иамăк, тетĕп.—Шуйттансем ҫитрĕҫ. Тархастăн ан уҫ.

Сĕтел хушшинӡен кăмака айне тарса пытантăм хам, кĕрĕк пĕркенсе выртрăм. Иамăкăм уҫрĕ кĕртрĕ шуйттана. Воспоти!

Шуйттанĕ шуйттан пулман, арăм пулнă. Аран сывлаҫ хăй. Ара ҫуран ӳсĕр пуҫпа ик ҫухрăм ытла килме сывлăш нумай кирлĕ пулмалла ҫав.

Ирхине ӡупрăм пуп патне. Ҫаплаҫапла, арман тĕлĕнӡе, икĕ шуйттан куртăм. Молепăн туса йарха. Леш, шуйттансене хăратакан ҫветтуйа молепăн тумаллата-ха... Тунăшăн ахаӡ тумăп...

Пĕр пăт, ҫиме хăварнă тыррах, леҫсе памалла пулӡĕ молепĕншĕн. Хăйамат пупĕ!

Кайран пĕлтĕм: пуппа тийаккăнах пулнă мана хăратакан шуйттансем, ҫавсемех хăратнă, йĕксĕксем!

Ман пек хуӡăшĕсем патне кайас вырăнне, ҫăварнире иккĕшĕ те вĕсем арман хуҫи патне кайнă хăнана. Кушак сĕте йуратман пекех вĕсем иккĕшĕ те ĕҫме «йуратмаҫҫĕ». Ҫавăнпа «ăша илкеленĕ» ĕнтĕ вĕсем ерехне ҫителĕклĕ. Ăша илсе тултарнă хыҫҫăн, тавлашу тухса кайнă вĕсен хушшинӡе. Пупĕ каланă:

— Ĕсĕ, тийаккăн тусăм, шулĕкла етем! Проҫвир ҫине хунă 5 пуссене хулăн кăсйуна персе ӡикетĕн те, 2-шер пуссемпе улăштаратăн, тенĕ.

Тийаккăнĕ:

— Ĕсĕ тата турăхшăн выҫăхса ҫӳретĕн. Ӡĕреспе пыракан хĕрарăма курсан, пĕшкĕнсе ӡĕрес ăшне пăхмасăр иртейместĕн, тенĕ.

Пупĕ тарăхса ҫитнĕ. Шăлĕсене йĕрсе тийаккăна ерехпе сапнă, тийаккăнĕ пуҫран ҫатлаттарнă йĕкерӡĕпе. Пупĕ вут сыппи тытнă, тийаккăнĕ тарма тытăннă. Пупĕ хăвалама тытăннă, тийаккăнĕ тухса тарнă. Пупĕ хыҫран, тийаккăнĕ пĕве урлă... Пĕве хыҫĕнӡе хăратса пăрахнă вара вĕсем мана арăмпа иксĕмĕре. Ак, ăҫта пулнă вĕсем шуйттансем!

Шуйттан вăл—шуйттанах ҫав!

М—и.

# Совет ҫине шан та, ху та кăмака ҫинђе ан лар.

Ҫуркунне пулђĕ ку ĕҫ. Совет йала, ђухăнсене пулăшу парас тесе, вăрлăхлăх тырă йанă. Епĕр виҫҫĕн пуринђен малтан ҫитрĕмĕр. Сире вăрлăх мĕн ђул кирлĕ?—тесе ыйтрĕҫ пиртен. Епĕ хам пуриншĕн те ответ паратăп: пире нумайрахђĕ, тетĕп. Миҫе теҫеттин ҫине? Мĕн таран ыр туса кăмăл тăвас килет ҫавна парăр. Епĕр хуť ҫĕр теҫеттин вађђи парсан та илетпĕр, тетĕп. Каллех ăнланмаҫҫĕ.— Нумайи акса ҫитменни?—Пирĕн пĕтĕм уйăпех акман. Тархашшăн соснанипе ырҫын пулса пире шертвă тăвăрах... 15-шер пăт пађĕҫ те, кашнинђенех ал пустарса хут илђĕҫ.

Ну, киле илсе ҫитертĕмĕр. А мĕн-ха вăл 15 пăт хамăр ђухăн ђухне? Илсе килтĕм киле—шутлатăп: аксан — ака тума плукă ҫук; луђђĕ сутас!

Ҫав самантрах пускил пырса кĕђĕ: тавай, тет, илетĕп!

Укҫине пађĕ, шăпах плукă илме ҫитет. Анђах каллех: мĕн мана лашасăр плукă? Карăм пулăшу комиттетне: лаша илме пулăшмăрши?—тетĕп.— Мĕн ђул сана?—Мĕнђул кăмăл тăвăр... Пађĕҫ вăтăр пилĕк тенкĕ. Каллех алă пусрăм. Шутларăм мĕн пўр укҫине те, куратăп—лаша илме ҫитет. Анђах ни плукă ҫук, ни акмалли... Кретит йулташлăхне карăм. Епĕ ђухăн, тетĕп. пĕр аллă тенкĕђĕ мана — хуҫайства йусаса йамаллăх.

Карăм укҫипелле килелле. Пăхатăп хам килкарти шалаш, килкарти мар. Иепле-ха ку шалаша епĕ лайăх лалашана илсе йарăп? Хуйхăрĕ манăн лаша! А, пўрђĕ? Ун пек пўртре пурнасси. Йурамасť кун пек пўрт пурăнма... Ҫакăнтан вара епĕ хуйха карăм. Ҫитрĕм трактире. Пăхатăп—унта уш такҫанах манăн икĕ йулташ хуйхăрса лараҫҫĕ. Маха апла?—тетĕп. Епĕ, тет пĕри,— ĕне илмеллĕх укҫа илтĕм. А мĕн тăвăпха епĕ ĕнепе сĕтне йуратман ђух?

Епĕ, тет тепри,—ҫурт тумаллăх укҫа илнĕ: а мĕн мана ҫург тума, ăш ҫавах варкаť, вилĕм те ђасах персе ҫитĕ...

Ҫынсем уш суха туса та пĕтерђĕҫ, епĕр трактирте хуйхă туса ларатпăр. Ҫынсем акса та пĕтерђĕҫ—епĕр ҫаплах хуйхăратпăр. Ҫынсем уш тыр вырма та тухрĕҫ—пире «хуйхăрмаллăх» та ҫук, пĕтрĕ... Аҫтан тата пулăшу пулĕ пире ђухăнсене? — тесе шутлатпăр. Кĕркунне ҫитсен комиттетсем виҫҫĕш те персе ҫитрĕҫ: парăмуна пар! Аҫтан парасха, епĕ ђухăнне пĕлместĕни мĕн? Прођђăнсене тўле! Мĕн тўлес, нимĕн те ҫук пулсан? Епĕр кил-ҫурта ҫыратпăр! Ма лашине илмерĕн? Ма плукă ҫук? Есĕ укҫа илтĕн! Илнĕ. Ҫавăнпа та илнĕ, мĕншĕн тесен епĕ ђухăн! Хайхискерсем пуҫĕсене кăтăрт-кăтăрт туса хыҫрĕҫ те саланђĕҫ.

Хĕллерехпе комиттета кайрăмăр: ҫуркуннеђђен пулăшăр!..—Нимте пулмасť сире!—Иеплеха апла?—Есĕр кив парăма та памарăр. Вăт-тăк йапала! Ытла та ђухăнран ăш ҫунаť... Телей пулмарĕ, Ав Ҫĕтĕк Кĕркури, ђухăн ҫын пулнăскер, Советран пулăшу илнипех йусанса карĕ. Телейсĕр нимĕн те пулмасť ҫав! ТИЛĔ ТУС.

## Сăра вутти.



Йен-касси ҫамрăкĕсем кăшарни вађђи сăра тума вут тупнă.

# Пӗр такашӑн тӑват шӑл.

Те сурхури ҫух сив сӑмакункӑ ӗҫни йурамарӗ, те каҫпа тумтирсӑр тула тухса пӑрсутитсӑ пулнӑран,—пӗр кайри шӑл вӗлерет ыратса. Ни вӗри йашка, ни сивӗ шыв йурамасӑ мура! Аптрул!

— Ех, ухмах, мӗн асапланса пурнатӑн вӑл шӑлшӑн, тухтӑра кайса кӑларттарсам, терӗ Натли инке иртнӗ шӑмат кун ман арӑм патне кӑвас тӗп илме килсен.

— Хӑй ухмахлӑхне кӑтартса пурнаӑ ҫав. Тухтӑр ҫук пулсан апла май хаӑ. Кахал мари вӑл... и-и тӗссӗр, тесе хуҫӗ Натли инке хыҫҫӑн хам арӑм та.

— Хӗрарӑм каланн пур ҫухне те вырӑнсӑрах пулакан марҫҫӗ, тухтӑр патне кайсан мӗн пулӗши, терӗм хам та пуҫ тӗшшӗн.

Тунти кун пите куҫа алшӑлипе тӗркесе ҫыхса лартрӑм та, пасар майлӑ тухтӑр патне ирех тухса утрӑм.

Ҫитрӗм—тухтӑрӗ ҫук. Кивйала аҫа ҫуратма кайнӑ, терӗҫ. Кайасси ҫуратма мар, ҫураттарма кайнӑ пулмалла та—пӗлеймерӗҫ пулас Тухтӑрӗ ҫук пулсан та, халӑхӗ Шупашкарти Коркоп макаҫӗнне ҫӑнӑх илме пухӑннӑ пекех тулса ларнӑ.

4-5 сехет ҫеретре кӗтсе ларсан, пӗр хвершӑл патне аранах лекрӗм.

— Мӗн ыратаӑ санӑн, тет.

— Курмастӑнши пите ҫыхнине, тетӗп.

— Айта салт!

Салтрӑм.

— Ехӗ-ей, пӗтнӗ-иҫ санӑн шӑл-ҫӑвар! Пилӗк шӑл кӑлармалла пулаӑ, тесе хуҫӗ хвершӑл епӗ ҫӑвара карсанах.

— Ай, турах!.. Ӗнер анҫах така пуснӑҫҫӗ, така пуҫне мӗнпе кӑшлас апла, тесе йатӑм ҫӑтаймасӑр.

— Така пуҫне кӑшлаканӗ тупӑнӗ вӑл, есӗ ху пӗр шӑлсӑр пулсан мӗнле пурӑнӑн вӑт, терӗ хвершӑл темшӗн хӑрах куҫне хӗстерсе.

— Такасӑр йулӑпин йулӑп, анҫах шӑлсӑр... Пошалӑстӑ шӑлсӑр ан хӑвар, ыран леҫсе парӗҫ, терӗм хвершӑла аллине тытса.

Апла каласан, хвершӑл пӗр тутӑхма пуҫланӑ хӗскӗҫ илҫӗ те, шӑла шата-арт тутарҫӗ. Ик куҫран ҫиҫӗм пек вут тухса карӗ. Хӗскӗҫе ҫӑвартан кӑларсан:

— Татӑлса килнӗ мур шӑлӗ, тепре кӑларас пулаӑ, терӗ те каллех—кӑтӑрт-кӑтӑрт... шатӑрт тутарҫӗ. Ҫӑвартан ним майсӑр йун перет. Ҫӗррӗн йулса пулмӗ, терӗм. Пӗр ҫур сехетрен аранах шӑл катӑксене пуҫтарса ҫикрӗм те, килелле тухса утрӑм...

Таки вӑл, ҫӑвапатне! Тепӗр тӑват шӑл кӑлартарасси мӗне тӑратҫӗха вӑл. Халӗ ӗнтӗ лайӑх—пӗр шӑл та ыратакан ҫук.

Хӗпӗртенипе така вырӑнне ӗнер ват каҫаканах пусрӑм.

Шӳрпе ҫиме пырӑр. РОНИ.

---

## Портфӗљ йурри.

Хутлӑ-хутлӑ епӗ пур,
Хутсем ҫикме вырӑн пур,
Ҫут тӑка та манӑн пур
Питӗрмеллӗх шанҫӑк пур.

Уҫрештенире ӗҫлекенсем
Мана тӗксех йамаҫҫӗ,
Капинетра ларакансем
Мана илсе ҫӳреҫҫӗ.

Мана тытнӑ ҫынна курсан
Майра хӗр те паллашаӑ,
Кайран вара ҫун хушӑнсан,
Виҫҫӗмӗш пайне аптӑратаӑ.

Вырӑна кӗрсен мана тытсан
Саветушҫи савӑнаӑ,
Растрат пулсан салатса йарсан
Сут аллине ҫакланаӑ.

Сутран тухсан (айӑплансан)
Вырӑнтан та сирпӗнет,
Хӗрлӗ питлӗ майрийӗ те
Вӗремӗпе сивӗнет.

Аптрамалла ун ҫух манран
Хутсем тухса вӗҫеҫҫӗ.
Вырӑнтан тухсан киле кайсан
Мана ҫакӑр ҫикеҫҫӗ.

МИКИТА КӖРКУРИ.

# Нуша кулаҫ ҫитерет.

(Кăвак сухал Каврил калаcа панинҫен).

Ҫĕнĕ тырă пиҫиҫҫен кивҫен тырă пама ыйтма кайсассăн, Пуйан Никкăн патĕнҫен рак пек ҫакса намăсланса тухнă хыҫҫăн, пĕрик кунтан хырăм, кĕсйери тапак хутаҫҫи пек пушанса карĕ, пит-куҫ типĕ пăрăç хутаҫҫи пек пĕркеленсе имшерленҫĕ.

Виҫҫĕмĕш кунне, каç пулас умĕн, тăпра айне пытанса йулнă паранкăсене шырама кĕрес шутпа, сакай алăкне уҫнăҫҫĕ,—пўрт алăкĕ уҫăлах карĕ те, пырса кĕҫĕ йуплĕ сухал. Ратне килҫĕ пуҫ тесе, сакайне анма пăрахрăм. Камши тесе пăхрăм та, Пуйан Никкăн ахлатаĕ. Унта-кунта пăхрĕ те, хĕпĕртерĕ пулмалла—никам ҫуккине курҫĕ те, пуҫларĕ хуллен пуплеме. Укҫи ҫухалнă мĕн йуплĕ сухалăн. Мана йумăç пулма ҫĕнме килнĕ.

Илсе карĕ вара мана мăн хырăмлă, ҫапçутă атăсем тăхăннă Никкăн хуҫа хăйĕн ҫуталса ларакан кил-ҫуртне. Хăна пултăм еп вара унăн патĕнҫе, сăрине те ĕҫтереҫҫĕ, ерехне те ĕçтереçҫĕ, пуҫрап та аҫашлаҫҫĕ. Хам, тăрна патне пынă тилĕ пек, ларатăп сĕтел хушшинҫе сарăлса.

Хăналанă ҫухне ҫанталăк пăртакçă капăртарах пек туйăнаĕҫĕ те, йумăç пăхма хушсан, ҫанталăкĕ те улшăнса кайнă пек туйăнса карĕ.

Ăçтан хăйаматран тупас ку йуплĕ сухалăн укçине, Соломон патша марçке епĕ. Соломон патша вăхăтĕнҫе пурăннă пулсан, хамах Соломон пулнăҫĕ-и мĕн те, халĕ Соломон патша вăхăҫĕ мар та, Соломон пулма пултараймастăп. Хăраса ўкнĕ хыççăн, ҫапла шут тытрăм: ĕçсе вилме анҫах май тупрăм.

— Пĕҫҫен пўрт мана парăр. Унтах ҫур витре ерех пултăр, терĕм.

Икĕ кунҫҫен хам пата никама та ыма хушмарăм.

Пахҫара кăтартрĕç пĕҫĕк пўрт. Унта карăм пĕҫҫенех.

Ҫĕрле пулаҫҫен ҫаплах ĕçрĕм унта. Ўсĕрпе ўкнĕ пулмалла, вăрантăм та сурçĕрте, пуç ыратаĕ ҫурлас пек. Сармантейăн сар ҫăххи сар ҫăмарта тавра мĕнле кускаланă, ҫавăн пекех, кускаласа ҫўретĕп пўрт тăрăх ăш варкаиипе.

Хуҫа автанĕ еп вăраннине сиснĕ пекех, киккирекку!—тесе йаҫĕ савăнса.

— Отин йеç, терĕм вырăсла (ҫăвашла каласан, „пĕри пур" тени пулаĕ).

Тата 5—6 ҫерккине ĕмсе илнĕ хыçсăн, татах кикиреклетсе йаҫĕ автан.

— Тва йеç, терĕм каллех вырăсла.

Нумай вăхăт иртмерĕ пуҫ, шак-шакшак тутарҫĕç алăка. Кам унта, тесе ыйтрăм та, уçса кўртха, терĕç.

Пўрте кĕрсенех икĕ тарçă мана тилмерме пуçларĕç.

— Епĕр укçа вăрланă, анҫах есĕ пире çăл, тесе йăлăнаççĕ, ухмахсем.

— Сире çăласси маншăн йавăр мар, укçине кўрĕр хам алла, терĕм.

— Епĕр, ухмахсем 160 тенкине пĕтернĕçке, теççĕ.

Кўртсе паҫĕç укçине. Хăйсене йатăм çывăрма. Хам, ҫĕвик-ҫĕвик сала кайăк кантăр-вăрри курсассăн савăннă пекех, савăнса ҫăматанран 350 тенкĕ кăлартăм.

Кайса хутăм вара ҫăматанне хуçа патне крыҫтса айне.

Ирхине ирех тăтăм та, хисеплĕн кĕтĕм хуçа ҫуртне. Лупас айĕнҫе тўперен вĕрен çакма еп хушрăм. Вĕçне кирпĕҫ çакрăм та, пуçларăм ĕнтĕ сулантарма. Манăн „йумăç" суланаĕ, укça йенне „перĕнет". Кунта çĕрлехине те манмарăм, 510 тенкĕ çуккине те кăтартрăм.

Укçи сахал пулман мĕн, 510 т. хуçи хĕрхенмерĕ. Тупăннăшăн йуплĕ сухал савăнҫĕ—татах çĕр тенкĕ мана паҫĕ. Ĕçтерҫĕ те çитерҫĕ, лавпах киле леçтерҫĕ.

Акă ĕнтĕ самана. Пуйса çитрĕм, вĕт, епĕ.

* * *

Ĕçĕ, тўррипех каласан, çапла пулнă. Епĕ «отин йеç» („пĕри пур") тесе кăшкăрса йанă вăхăтра мана сыхлама хуçа тарçи алăк патне пынă. Епĕ „отин йеç" тенине илтсен, ҫупнă вăл хăйĕн йулташĕ патне калама.

— Ах, Петĕр, пĕтрĕмĕр! Укçа епĕр вăрланине йумăç пĕлҫĕçке, шуйттан! Алăк патне çитнĕҫҫĕ, «отин йеç» тесе кăшкăрҫĕ. Пит йерипен пынăҫҫĕ. Есĕ

## Хурах.

Пĕрре, çĕрле,
Иулташпа пĕрле
Пыратпăр урампа
Ыыҫҫăклă çулпа.
Лавкка тĕлĕнҫе
Кайрăмăр тĕлĕнсе:
Лавкаç Ларик
Кăшкăрҫĕ шарик!
— Хурах, тет, хурах!
Ах, тур, тытăрах!
Вăрăсем тапăнҫĕç
Лавккана çаратрĕç.
Ак йăпăр-йапăр
(Хамăр хашкатпăр)
Ҫупрăмăр урампа
Халăха вăратма:
— Кравул—хурах!
Халăх тухăрах!
Хурахсем тапăннă
Лавккана çаратнă!..
Пĕр тавар хăварман.
Вăррисем тытăнман.
Тепĕр куна
Тытрĕç вăррине:
— Ех, мушеник,
Лапкаçă Ларик
Хăйех çаратнă.
Таварне тартнă.
Анҫах аҫи айван
Пĕре те тунайман.
Вăл хĕпĕртенипе
Иулташне тĕппипе
Каласа кăтартнă,
Ашшĕне тыттарнă.

ЙЕХВИН.

те кайса пăхха, есĕ пынине пĕлейми, тенĕ.

Тепĕр тарçи пынă ҫух, автан тепре авăтнă. „Тва йеç“ тесе йанă епĕ ӳсĕрпе.

* * *

Çапла вара ман çинҫен ҫап саралҫĕ. Ыурна киле ҫаплă йумăç пултăм. Кунĕн-çĕрĕн ман пата халăх пыраҫҫĕ. Мĕн ҫул суйа сӳйаттăм. Çапах мана ĕненетҫĕç: çу-çăмарта çĕклетҫĕç, укçатенкĕ параҫҫĕç.

Мĕн тетĕн çак есĕ? Халĕ ма йумăç пăхмастăн, тетĕн? Ма пăхмасси... Халĕ-и?.. хаҫ... мĕн... ватăлтăм... мĕн... йумăç... мĕн... ехм... сыв пулха, манăн каймалли пурха... Васкатăп.

Каврилĕ каласа панинҫен çырса илнĕ ИЛСАРАИ.

## Ĕмме вĕреннин историйĕ.



9 уйăхри ĕмет...



7 çулти ĕмет...



10 çулти ĕмет.



Шкултан вĕренсе тухсан, ĕмтерет...

# ПАШКА.

Иалĕçтăвком çыруçи, темшĕн тарăхса, урайне лаҫ! сурҫĕ те:

— Çыраççĕ çав... Вĕсене хулара çырса ларма лайăх... Хут темĕн çырсан та, ҫăтмалăх пур.

Пăх халĕ! Вĕсене пĕр ерне хушшинҫе, ыраш мĕн ҫухлĕ акни çинҫен, шăтса тухни çинҫен, ыраш акнă вырăн миçе панҫа шутланни çинҫен çветĕни тăратмалла. Ку хамăр йалти çеç пулсан, пĕр сăмах та шарламăттăм... Ку виçĕ йалпаçке... виçĕ йалпа!.. ҫорт!

— Мĕн хуйхăрмалли пур! — терĕ йăвашшăн претçетатлĕ,—пĕтĕмпех çырса парăпăр!

— Мĕнле çырса парăпăр, тетĕн есĕ, шухăшлаха хăвах, пĕр ерне хушшинҫе пĕтермелле вĕт-ха?

— Епĕр шутласа пĕтереҫҫен, çур çул иртсе кайаĭ веĭха? Ырашĕ те йур айĕнҫе...

— Ништо! Кун пек ĕçе пĕрре çеç курман. Çыр: «Райĕçтăвкома. Сирĕн çав-çав нумĕрлĕ отношенийе хирĕç çавна, кăна йама хушатпăр!

— Мĕн, çавна, кăна, терĕ тĕлĕнсе çыруçи.

— Пĕлместĕн-и мĕн мĕнне, паллах çветĕни тăратма мĕн кирлĕ! Инструкси ыйтса çыр!

— Тăхтаха, Çĕпритун!—терĕ çилленсе çыруçă. Райĕçтăвкома епĕр ăçтан хушма пултаратпăр? Вăл пирĕнтен асли, вĕт-ха!.. ыйтатпăр—тесе çырса йарсан йураĭ!

— Есĕ ан калаçса тăр,—терĕ кулса Çĕпритун,—çыр, ку вăлтапа епĕр вĕсене çаклататпăр. Çветĕнисене епĕр пурĕ-пĕр вăхăтра тăратаймастпăр вĕтха? Пултараймастпăр. Снаҫăт çырмалла. Вĕсем «хушатпăр» тенĕ сăмах тĕлне çитсенех, карĕç вара хыçкаланма. Малтанах «вăл сăмаха сире çырма йурамасĭ»—тесе çырса йараççĕ,—çийĕнҫен пĕрре йатлаççĕ. Унтан инструкси хатĕрлеме комиçси суйлаççĕ. Комиçси вăл ĕçе пĕр çур çула йахăн тăсаĭ. Епĕр вăл вăхăтра, çветĕнисене хатĕрлеме те ĕлкĕретпĕр. Ун ҫух, ыраш та йур айĕнҫен тухаĭ...

— Пашка есĕ, Çĕпритун!—терĕ савăнса çыруçă. — Сан пуçра ҫăнах та миме пур! Сана кунта мар, сана кĕпĕрнене, аслă кăмиссара кăна кӳртсе лартмалла, йе укçа шутлаканни тусан, есĕ ҫылай укçа ĕçлесе тупмалла!

Претçетатлĕ сухалне шăлкаласа, хăйне хăй савăннă пек пулса ларҫĕ.

КА—ПĂВ Н. А.

## Пурнăç тухмахĕсем.

### Самани çавăн пек.

— Сирĕн йалти Иăванҫи Хĕлĕпĕ килте çуки мĕн вара?

— Çук, килте пурăнмасĭ вăл. Алимент тӳлесрен Çĕпĕре тарнă.

Окĭ. хĕлхемĕ.

### Ватă пионер.

— Хветĕр, есĕ пионери, комсомоли?

— Пионертах тăратăп. Атте ҫăпта çаптарнă пирки, сухал та шăтма пуçларĕ, пионертан комсомола куçармаççĕ.

Тинсар.

### Сивĕ.

Саветуйушҫи: Мĕн ес пайан вут хутмани, мĕншĕн слушăшҫисем ҫĕтреççĕха?

Сторошихxă: Вут хутманран мар—есĕ килнĕрен ҫĕтреççĕ вĕсем.

ИЛЕНКЕИ.

### Нумай.

— Сирĕн йалта куҫттурă тĕлĕшпе ĕçлекенсем пури?

— Мĕнле «куҫттурă тĕлĕшпе»?

— Ара, çутăлăх тĕлĕшпе ĕçлекенсем.

— Шутсăрах нумай çав çавнашкал çынсем. Çĕрĕн-кунĕн хăшĕ çав çутти ĕçĕпех ĕçлеççĕ.

Пăшатан.

### Амăшĕпе аҫи.

— Ҫарăн, Ваçса! Ан ашкăн. Ашкăнсан хĕнетĕп.

— Мĕншĕн ĕнер Иăван пиҫҫене хĕнемерĕн. Вăл, атте çук ҫухне килсен, санпа пит ашкăнҫĕ те, çапахçăна есĕ хĕнемерĕнçке.

Сокколов.




## Вилнисем ђӗрӗлеҫҫӗ.

Вилнӗ ҫынсем ђӗрӗлсе тӑрассине ӗненекен уђрештени те пур хӗрлӗ Совет ҫӗршывӗнђе. Тӗнђе тӗрлӗ тесе ахаԓ каламан ҫав. Ҫул ҫырать:

Аслӑ-Патӗрйел районӗнђи атминистратси пайӗ 1912-мӗш ҫулта вилнӗ Верликкӑв краштанин ҫине, сӑмакун тӑвать тесе, 10 тенкӗ штраф хунӑ. Штрафне хӑҫан шыраса илме пултарӗши? 10 тенкӗ вырӑнне, 10 шӑмӑ татӑкӗ те тупас ҫук, мӗншӗн тесен Верликкӑв вилни 15 ҫул ытла ӗнтӗ, тет.

Вилнӗ йапала та хӑш ђухне ђӗрӗлме пултаратьске. Ав отђотсем тӑрӑх, уђрештенисенђе йапӑх ӑҫлекенсем пӗтсех пыраҫҫӗ, ӗҫре апла мар.

## Халӑха йӑхӑрмалли ҫӗнӗ май.

Сӳкӗҫ ҫырать:

Шуркасси (Шупашкар районӗ) ђиркӳвӗн пупӗсем кӑҫал, тоххот сахалран, халӑха ђиркӳве тӳртмалли ҫӗнӗ май шухӑшласа кӑларнӑ. Вӗсем кашни праҫник кунах сопрани туса вӑрҫаҫҫӗ. Халӑх, ђиркӳве ҫӳреме шутламасан та, вӑрҫнине курма ђиркӳве нумай пухӑнать, тет.

Хӑш-пӗр йалсоветсен вӗсенђен «пример» илмелле. Ҫапӑҫни вӑл ђӑнах халӑха пухма пултарать.

## Ђӑвашран улпут пулнӑ ҫынсем.

Ун пеккисем кашни кӗтесрех пур. Акӑ Хӗрлӗ-Ђутай районӗнђен ҫыраҫҫӗ:

Пархаткин йалӗнђи ҫӗр уполномођӑнсем, йанварӗн 5-мӗшӗнђе, Хӗрлӗ-Ђутай районӗнђи ҫӗр комиҫҫи йышӑннӑ прикӑварӑн коппине илеймесӗр, пӗр талӑк ҫурӑ иртерне. Пӗр талӑк ытла 20 ҫухрӑмран пынӑ лашасем выҫса тӑђӗҫ, теҫҫӗ.

Лашасем выҫни мӗн вӑл? Пӳрократсем выҫма пуҫласан, самана улшӑнма пултарать. Лашасемшӗнех улшӑнмасть.

## Сыснана сысна ҫӑвать.

Сӳре ҫырать:

Вӑрнар районӗнђи Мӑн-Айпӑш йалсовет претҫетаттӗлӗ Елексантр Кӗркурђӗ йатлӑ пуйан ҫынна, ђухӑн ҫын тесе, утостоверени ҫырса панӑ. Утостоверенишӗн сысна ҫури илнӗ, тет.

Алла алӑ ҫӑвнӑ пек, сыснана сысна ҫӑвать. «Капкӑн» та йӗплӗ ҫӑмах пӗҫернӗ шывра ҫӑвасшӑн вӗсене. Тасалӗҫ иккӗш те.

## Шӑшисем.

Ҫӗнйал-Пукашри (Сӗнтӗр-вӑрри районӗ) шкулта кушак кайӑкӗсем нумайланса кайнӑ. Тата расна ик уралӑ кушак кайӑк та пур.

Шкулта стурӑшра пурӑнакан Лупанӑв Микита шкула хутма панӑ вутта хӑйӗн килне сӗтӗрсе кайать сӑмакун пӗҫерме. Шкул кушак кайӑкне ђарма май ниҫта та ҫукши мӗн? тет Шӗнтреш.

Маҫук? Ак «Капкӑн» шартлаттарса хуђӗ те ӑна, тапаланса ҫеҫ выртать.

## Иурлас, йурлас йурринe...

Каҫђакан купӑста пахђине курсан, купӑста ҫимесӗр ђун канмасть.

Ҫавӑн пекех Шупашкар районӗнђи Шурђа-касси шкулӗнђе вӗренекен пионерсем кӑҫал Сурхури ђух йурламасӑр ђатаймарӗҫ пулмалла. Ирпе тӑваттӑн

пионерсем кашни килĕрех, «славит« туса çÿрерĕç.

— Ей пионерсем! Ма Сурхури йурри йурлаттăр?

— Халĕ каниккула йаҫĕç те, йурат̆ пулĕ тетпĕр, теççĕ.

Каниккул йаҫĕпе «Капкăн» йурри йурлаттарарха сире. Çинçерех сасăпа йурлăр!

## Çунасăр лаша.

Ертеменсем (Вăрнар р.) Тарас Хветĕрĕ шăрпăкран пуçласа пĕрененке çитиҫҫен «панккă» лартса картла выҫана. Иулашкинҫен йулашки çунине, ҫăнҫăн панккăран йалхуçайстви хатĕрĕсем туйанма илнĕ 10 тенкĕ укçине «панккă» лартса выҫаса йанă. Халĕ, вăрмантан вăрман кÿмелле ҫухне, Хветĕр лаши хÿри çине çакса пĕрер пÿленке илсе тавăрăнат̆, хăнана каймалла пулсан хĕлле урапа кÿлсе тухат̆. Пит ҫейе Тарас Хветĕрĕ.

Кели.

## Активнăй комсомолĕссем.

(Ыраш-пулăх, Куславкка р.).

Райкомол çекреттарĕ: Есĕ, йулташ, миçе уйăх комсомола вснос тÿлемен?

Комсомолĕс: 1926-мĕш çулшăн тÿленĕҫҫĕ, 1927-мĕш çулшăн тÿлемен.

Райкомол çекреттарĕ: А, есĕ йулташ?

Комсомолĕс: Епĕ пĕртте тÿлемен. Мана комсомол пилетне паман та, мĕншĕн тÿлес ман.

Райкомол çекреттарĕ: Капла йурамаст̆. Сирĕн тÿлесех пулат̆. Тÿлемесен сире комсомолтан кăлараççĕ.

Комсомолĕссем: Мĕнле кăлараççĕ? Октапĕр револҫутси 10 çул тултарнă йатпа пулнă амниçтипе пирĕн тÿлемелли пĕтмени вара?

Квасков Н.

## Копператси тавра.

**Прикашҫĕк.** Пирĕн копперативва нихăш копператтив та çитеймест.

**Инçпектăр.** Ăçти копперативва?

**Прикашҫĕк.** Асса-кассинҫине.

**Инçпектăр.** Ма?

**Прикашҫĕк.** Çынсен копперативĕсенҫе аван, кайакан таварсем нумай. Пирĕн кайми таварсем.

Сава.

## Икĕ ҫăваш.

Икĕ ҫăваш пĕрре
Хулана килнĕ пĕрле.
Мĕн çăмăлпа-ши-ха вĕсем?—
Тейĕç мана йулташсем.
Çăмăлĕ мĕнĕ, —
Ав, вĕсем икшер пăт тыррине сутса
Икĕш ик кăсйа тултарса,
Вак тĕвек таварсем илнĕ.
Халĕ хваттерелле кайаççĕ.
Хăйсем тавар хакĕ ÿкменни çниҫен
Усламçăсем ашкăнни çинҫен
Калаçса шавласа пыраççĕ.
Çав хушăрах пĕри: ҫим, терĕ, ҫим-ха!
Кирле пиҫҫен Микули вĕт ку пăх-ха!
— Çук, вĕт! Ăçта? Хăшĕ?
Тесе пăхат̆ йулташĕ.
Ей, куçу! Авă вара картусли!
Çук пуҫ, утти ун мар.
— Иепле ун мар?
Тупата Кирле пиҫҫен Микули!
Хулара кунта пурте çапла
Каçăрăлса утаççĕ.
Ел курмасни, авă йепле
Вĕттĕн-вĕттĕн пусаççĕ?
Хут̆ мĕн каласан та ку
Микула! Ҫупса карĕ те ку
Хайхине кап йарса тытрĕ хыçалтан.
Пĕсмĕлле. Майра! Иепле тарас усалтан!
Акă леш вăрçа пуçларĕ ҫăваша:
— Ҫувашла, тет, ҫувашла! йа вот тте!..
Хайхи пирĕн йулташа.
Ҫутсех çупкă çути лекеҫҫĕ.
— Çтан паллан! Ей самана!
Ҫăваш арăмĕсем апла
Ÿсĕр упăшкисене çеç кÿпкеççĕ.
Кăсем тăрри-урине те пĕлмеççĕ.
Майраран иккен питĕ сыхă пулмалла,
Тесе ҫăвашсем утрĕç вара малалла.

Н. ИЕВТОККИМĂВ.

---

## Мĕн мĕне пĕлтерет.

**Çапăçу**—Клупра картла выҫанă хыççăн пулса иртекен йапала.

**Хаçат**—вуламалли çуртсенҫе ҫасҫасах кулак аллинҫе çурлакан йапала.

**Лосăнк**—пĕр-ик кунтанах çтена çумĕнҫен вĕçсе çурăлса анакан йапала.

**Сурҫăк**—вуламалли çуртсенҫе „урайне ан сур“ текен хутпа пĕрле урайĕнҫе çутăлса выртакан йапала.

**Тавлашу**—ерех пирки тухă калаçу.

**Ҫиркÿ**—туса пĕтереймен клуп.

К. К. Пумашкĕн.

# Хвершӑл пӳлӗмӗнҫе.

Ирхи хӗвел илемлӗн пӑхать. Ҫынсем хвершӑл килессе кӗтсе курни-илтнисем ҫинҫен калаҫса лараҫҫӗ. Пӗр хӗрарӑмӗ калаҫса лараканнинҫен ыйтать.—Мӗн ыратнипе килтӗнха есӗ тата?—Ара варвиттипе асапланатҫке ман 12 ҫулхи хӗраҫа. Кунпа виҫҫӗмӗш хут та килеп ӗнтӗ те, анҫах уссине пӗлмерӗмха. Те аваннине памаҫҫӗ пире ҫавашсене, емелне, терӗ арӑм.

— Ҫӑнах та ҫапла пуҫ ҫав, тесе хуҫӗ тепри.—Акӑ ман аҫа та ерне ытла ӗнтӗ пӗрре илсе килтӗм, емел те илсе карӑм, пӗртте майа каймарӗ,аптраса тепре килсе пӑхас терӗмха. Ав кунта мишавай теҫҫи пурӑнать. Ҫавӑн арӑмӗ варвиттипе аптранӑ та, пӗрик кунта ҫӳрекен пулвӑ, тет. Кунне иквиҫ хут хвершӑл патне ҫупса килет, тет. Ара вӗсене пирӗн пек пӑхаҫҫӗ-и! Лайӑх ун пеккисене хвершӑл лайӑх емел парать. Вӗсем епӗр мар вӗт.

Ҫапла хӗрарӑмсем калаҫса ларнӑ ҫӗре, пӗр тӑнлӑрах ҫамрӑк ҫын итлесе тӑҫӗ те, ҫӑтаймасӑр вӗсен сӑмахне сӳнтерес тесе ҫапла каларӗ:

— Есӗр емелӗрсене илсе кайасса кайнӑ пулӗ-теха, анҫах хвершӑл мӗнле памаллине, тата ҫирлӗ ҫынна мӗнле апат ҫитермеллине турӑри?—тесе хушса хуҫӗ.

— Ӗ-ҫте-р-тӗ-м, пӗр виҫ хут та парса пӑхрӑм. Ним усси те пулмарӗ-ӗ!

— Апатне ӗнтӗ вӑл хушнӑ пек ӑҫтан ҫитерӗпӗр. Вӑл вӗренӗ сӗтпе шур кулаҫ анҫах ҫигерме хушать те, таҫтах вӗсем пирӗн пек ҫавашсемшӗн. Кулаҫне, пулсан, вӗретнӗ сӗтсӗр те аван ҫийӗтҫӗсха пирӗн аҫасем.

— Вӑт апла пулсан хвершӑла лайӑх емел памас тесе айӑплама ҫук. Епӗр емел ҫине анҫах шансан, тата хвершӑлсем ҫирлӗ ҫынсене мӗнле апат ҫиме хушманнине итлемесен, нихҫан та пире нимӗнле емел те пулӑшас ҫук. Мишавай ҫинҫен калараӑр. Вӗсене лайӑх емел панӑ теттӗр. Вӗсем хвершӑл хушнинҫен пӗр йӗп пек те иртмеҫҫӗ. Хвершӑл ун арӑмне кунӗпе те апат ҫиме хушман тет те, вара ҫавӑнпа упӑшкине: хаҫ ҫиме йураты! тесе ҫуптарать, тет. Леш каллех ҫиме хушмасть, тет. Ҫапла вӑл хушнине итлесе тӑрса ҫас ҫӗрӗлнӗ, тет вӑл. Пире калаха, выҫӑ тӑр, тесе. Епӗр: кулса каларӗ, теме пуҫлӑпӑр...

Ҫав вӑхӑтрах хвершӑл аптеккӑ алӑкне уҫса йаҫӗ те, пурне те: номӗрсем пури? Камӑн номӗр ҫук, илӗр, терӗ. Ну, первӑй номӗр кӗр, терӗ.

Пӗр сарлакарах арӑм аҫине ҫӗклесе кӗрсе тӑҫӗ.

— Инке! Лар. Ҫак тенкел ҫине.—терӗ хвершӑлӗ.

— Епӗ-и, терӗ арӑм.

— Сана калап ҫав.

— Лармасан та йурӗха, хаҫ ҫылай лартӑмӑрха.

— Ну, кирек-йепле пул. Мӗн кирлишӗн килтӗнха, инке?

Епӗ-и? Есӗ ҫав!

— Ман ҫак аҫа варвиттипеҫкеха, пӗр ерне ытла ӗнтӗ. Прушки парса йанӑҫҫӗ, иккӗшне ӗҫтертӗм те, уссине пӗлмерӗм, вара ыттисене памарӑм та.

— Мӗн йатлӑ вӑл?

— Епӗ-и?

— Аҫу ҫирленӗ, вӗт, аҫу йатне ыйтап.

— Е-е, аҫа Курти йатлӑ.

— Ашшӗ мӗн йатлӑ? Хушамаҫӗ пури?

— Ашшӗ—Мӗтри Павӑлҫ, теҫҫӗ, хушамаҫӗ—Ҫурнух, теҫҫӗ.

— Миҫе ҫулта вӑл?

— 38 тултарса 39-ра карӗ пулас ҫак Илен кунӗ.

— Фу ты! аҫу миҫере тетӗп?

— Е е, аҫа 3 ҫул ҫитет Пукравра.

— Хӑш йалсем есӗ?

— Еп-ӗ-и? е-е...

— Ну-та, есӗ.

— Епӗ Виҫпӳртсем пулап, ара палламасна? Епӗр темиҫе те килнӗҫке кунта.

— Ӑҫтан палласа пӗтерен кашни кун ҫӗршер ҫын килеҫҫӗ те. Нумайранпа-и ҫирлӗ?

— Ӗпӗ-и?

— Аҫу тетӗп!

— Е-е... аҫа ӗнтӗ йун-кун, хам пасара кайсан ҫирленӗҫҫӗтеха, миҫе кун пулатха?

— Аҫуна мӗн ҫитерсе усран?

— Епӗ-и?

— Футти! «Епӗ-и, епӗ-и». Есӗ пулмасӑр, шкаппа калаҫапи кунта.

— Епӗ ӑна хуратул пӑтти, тата салма ҫитереп.

— Апла ан ҫитер, вӗретнӗ сӗт пар, рис кӗрпи шӳрпине пар... Ака сана тумлампа ӗҫмелли парап. Кунне 4 хут икшер тумлам пӗр ҫей кашӑкӗ вӗретнӗ шывпа хутӑштарса пар.

— Прушки ҫуким. Прушки аван тенӗҫҫӗ мана кӳрӗшсем.

— Есӗ мӗн панине ил, мӗн калани не итле!

— Епӗ-и?

— Есӗ ҫав, есӗ!

— Апла йурӗ еппин, ара мӗнле ӗҫтермелле терӗнха ес ҫакна?

— Ну вӑт сан пуҫӑнта прушки шухӑш пулнӑ, епӗ мӗнте ӗҫтермеллине каланӑ ҫух есӗ мӗн итлерӗн? Икшер тумлам. Кунне тӑват хут...

— Е-е... Иурӗха, есӗ пӑртак ҫӑрарах туса памалаӗҫҫӗ.

— Ҫутак ес, инке! Емел вӑл пӑтӑ мар, вӗт.

— Е-е есӗ, хвершӑл, паҫӑр мӗн пӑтти ҫитерме хушнӑҫҫӗ-ха?

— Каланӑ сана пӗре, тух кунтан. Урӑххисем кӗҫҫӗр. Вӗсем те ҫирлӗ. Санпах кун иртерес мар, атту каҫ пулӗ.

— Второй номӗр кӗр! кам унта?- тӗрӗ хвершӑл.

— Ҫимха, терӗ леш арӑм, епӗ хам та старав марха. Хамшӑн та илес пӗр килнӗ ҫухне.

— Иурӗ мӗн йатлӑ есӗ?

— Епӗ-и?

— Есӗ ҫав!

— Епӗ Алтати йатлӑ.

— Аҫу мӗн йатлӑ тата?

— Манӑн -и?

— Санран ыйтап та, сан пулмасӑр.

— Атте пурҫӗ те вилнӗ вӑл. Ман атте ҫук,

— Ҫук пулсан вилнӗ тӗк йаҫӗ пулнӑ, вӗт?

— Пурҫӗ-ӗ йаҫӗ те, Уртемей йатлӑҫҫӗ.

— Миҫе ҫулта?

-— Е-ӗ вӑл вилнӗ ҫух 55-реҫҫӗ, хаҫ...

— Вилнӗ ҫыншӑн емел илместӗн вӗт! Вӑл кирлӗ мар.

— Е-е епӗ-и? Епӗ хӗрӗх ҫултартӑм пулас.

— Упӑшку пури сан?

— Пурҫӗ, кунта килмерӗ вӑл.

— Кунта килнине ыйтмаҫҫӗ. Пури тӗтӗп.

— Е-е пур-пур, килте пур.

— Мӗн ыратаӗха сан, инке?

— Ура лаппи ыратаӗ. Ав пӑхха. Кирпӗҫ ӳкрӗ те такки ыратаӗ. Темиҫе хутҫен ларттартӑм, ҫапах ыратаӗ.

— Ех, инке! Кунта ним сикмелли те ҫук. Есӗ ахалех ҫав йумӑҫсене, уруна сикнӗ тесе, турттарса ыраттаратӑн.

— Иумӑҫ патне кайман епӗ. Хамӑр йалта пӗр арӑм ӑста, ун патне темҫул килеҫҫӗ ларттарма.

— Ан калаҫса тӑр ӑста тесе. Ним те пӗлмест вӑл. Сыпӑран ҫӑнахах сиксен ӗмӗрте те пӗр ура лартма пултараймаӗ вӑл. Ака ури ним те сикмен. Ӑна лартрӑм тесе санран укҫа илнӗ. Ака сана емел парса йарап, кашни кун пӗр ик хут ываҫупа уруна сӑтӑр. Ну, тух! Ҫигӗ. Ҫынсем нумай унта.

— Ҫимха. Пирӗн пайахамӑн пыйти нумай. Ҫавӑншӑн емел ҫук пуҫ сирӗн?

— Пыйтӑ емелсӗр те пӗтет. Ҫӳҫне ҫап ҫут илсе йар хаҫӑпа. Кашни ернере мунҫа кӳрт. Мунҫа хыҫҫӑн таса кӗпе тӑхӑнтарт. Ну, тух, ӗнтӗ.

— Тухасса тухӑп таха, епӗ аҫана мӗнле памаллине мантӑмха?

— Кунне тӑват хут икшер тумлам.

— Сӗтпе-и, йе ҫейпе терӗни ҫак?

— Вӗрентӗ шывпа тенӗ сана. Пуҫа ҫавӑран.

— Шывне нумай йамалла терӗниха ҫак?

— Пӗр ҫей кашӑкӗ терӗм те... Ҫӗр хут кала сана!

— Ҫей кашӑкӗ тени пысӑки? Пирӗн ун пек кашӑк ҫук. Иашка ҫимелли пур та, тата кӗмӗл кашӑк пӗрре пур.

— Хуӗ кӗмӗл пултӑр, хуӗ йӗс пултӑр, хуӗ те пӑхӑр пултӑр—ҫей кашӑкӗ пултӑр.

Ну, тух ӗнтӗ виҫ сехет пур ес кӗни...

Тепӗр ҫур сехетрен аран-аран тухса карӗ хвершӑл патӗнҫен арӑм. Арӑмне хвершӑл ҫавӑтнӑ. Татах калаҫасран ҫӑвартан тытнӑ.

— Ну, второй номӗр кам? Кӗр!

ИАЛҪЫННИ.



## Кĕркунне.



— Тырă пур, ђух ĕçесха, савăнарха вилиђђен...!

---

## Ухатара.

Хăшпĕр ухатниксем пăшал кĕпçи çумне кантрапа çыхса панă кайăка лайăх персе тытаççĕ вара.

—

Кайăк хыççăн ухутник ђупаĭ, уславçă хыççăн—фининçпектăр, шулĕк хыççăн—милитсионер, машшинискă хыççăн аслăраххи, аслăраххи хыççăн—асли, кашкăр хыççăн ђупакансем çукпа пĕрех вара.

## Вулаĭ.

— Ăçта кайав?
— Вуламалли çурта.
— Мĕн тума?
— Картла выђама.

# Шухăшсемпе

Мĕскерле шухăшсем кĕрсе каймаççĕши, пĕр пĕђђен пӳртре ларнă ђухне. Таçта та кайса çапкаланса çӳрен, темскерле пысăк ђына кĕрсе те пăхан, анђах кайран...—тесе вăрăммăн сывласа каласа пĕтерђĕ пĕр 35 çула çитнĕ йалти патмар çын.

Ку Михаđа. Тар кăлармасăрах пĕренине çуна çине йăвантарса хума йуратакансćер. Пурнăçра копперattив претçетаттĕлĕ пулса курасшăн вăл. Çавăнпах хăйĕн шухăшне çапла каласа кăтартаĭ.

— Ирпе кăвак çутăллах, ыйăхран вăрантăм та, ларатăп кăмака çинђе. Темскер шухăшсем кĕрсе карĕç, ђиперех копперattив правленин претçетаттĕлĕ пулса тăтăм. Пысăк ĕç вĕт!... Правлени претçетаттĕлĕ?! Хам аллăра икĕ пине йахăн укçа тытатăп, лавккара мĕн ђухлĕши тата? У-у-у унтине шут шăрçисĕр шутласа та кăларас çук, темскерле прикашђĕкĕ укçа çине путса лармасĭ.

Ну, укçа аллăра нумай. Мĕн тăвас, тесе шухăшлатăп. Пасара кайас терĕм. Шутланăскере, ĕçе кӳртес терĕм, карăм пасара. Пасара çитсенех, таçтан шуйттантан, леш Косçпирт текенĕ куç умне пулђĕ. Унта кĕмесĕр нийепле те ђăтаймарăм. Кĕрсенех, мĕн тăвассине хăвăрах пĕлеттĕр, тавай пĕр путтылкине, терĕм. Лешсем:—тата кирлĕ мари, теççĕ. Илсе килнĕскер, лартăрах терĕм. Еçнĕ çемĕн ĕçетĕп. Ман çумма тата виççĕн-тваттăн çыпăçрĕç, пурте: стравствуйте, теççĕ. Хам палламастăп та. Манăн укçа пуррине пĕлеççĕ мурсем!

Хам ухçана шутласа пăхма та ĕлкĕрейместĕп. Кĕленђесем мăлт та малттах пушанса выртаççĕ. Кайран вара... вăхăтлăха шуйттан ђăмласа кайнă урана,-ура çине тăма та пултараймастăп. Мана—стравствуй текенсем те çĕртех йăванса выртаççĕ.

Унтан епĕ, те çывăрнă, те антранипе] ним пĕлмесĕр пулса выртнă. Каç пулас умĕн пуçа тăратса пăхатăп, ђасрах укçана пăхас, терĕм. Кĕсйене ђиксе пăхатăп, ман укçа пĕр пус та йулман (хутаççине пăрахса хăварнă). Ентĕ те макрас, темскер тăвас! Киле çиткелерĕм, унђен те пулмарĕ, леш,

# пулнисем.

„айак-пěрҫисене“ шутлаканне „ревиҫи“ теҫҫě-иха, вěҫтерсе те ҫитрě. Айак пěрҫине мар, мěн ҫул укҫа ҫухатнине тěрěслерě. Манăн укҫа ҫук, ăҫта кайас! каҫарěҫи, терěм. Каҫараҫҫě унта!... Шур ҫул ҫурта хупмалла тăвас, тата пěтернě укҫине шыраса илес, терěҫ. Мана шур ҫуллă ҫурта хупсан пурнăпиха терěм. Каккуй шур ҫул ҫурта, тěр-р-м-е-н-е кайса хупрěҫ. Ех! матка мěнле пурнаĭши, тесе анҫах ларатăп. Ун пек пулма турă ан хуштăрах!,—тесе пěтерҫě Михаҫҫа.

— Санăн ку шухăшланă йапала ҫеҫ, анҫах ҫăнах пулнă манпа вăл ěҫ. Растраттă турăм вěт!—тесе хуҫě пěр 15 ҫула ҫитнě Ваҫкка. Пасара кайас пулаĭ. Укҫа ҫук. Аннерен ыйтса пăхас терěм. Ыйтсан, ҫăнах та 5 тенкě парса йаҫě, аш-пăш, сĕссем илме хушрě. Пасара ҫитрěм. Первай апат кěрсе ҫийес терěм. Столовăйне кěрсе пěр 30 пуслăх ҫирěм. Ěнтě мěн тăвас,—апат ҫинě хыҫҫăн шыв ěҫес килет. Шыв ҫук. Тавай сăра ěҫес, терěм...

Киле ҫитрěм, ман ни сĕс ҫук, ни аш ҫук. Анне пăскăртаĭ анҫах. Пăскăртни (йатлаҫни) ҫитмест, наккă тип мунҫа куртме пуҫларě, мěлки х-ы-т-ă. Унтан суйлав правине те ҫухатрăм: каласма та ҫук, как ҫěнетěн хирěҫ, та-а-вай каллех хăлхаран та, пуҫран илтерет анҫах, темскерле алли ывăнмаҫĭ?

Кайран мěнле-ха?—тесе ыйтаҫҫě пулě манран. Мěн мěнли? Выҫă лармалли пастовккă (колотовкă) опйавит турăм. Футти! Хам мар опйавит турăм, аннех колотовкă опйавит тутарҫě. Икě талăк пěр ҫăкăрсăр усрарě. Хам пурнаттăм та пулě, хырăм вилетех пуҫ, тенěҫҫě, пигě выҫса кайрě. Кусем ҫитмеҫҫě, тата пуҫпа йаҫěҫ. Ҫěпěре мар ҫěр мунҫана пуҫпа йаҫěҫ. Алăкне лаҫ! хупрě те анне, тул йенҫен тěкěлесе хăварҫě. Ларатăп вара шалта мěскěн шăши пек...

Ҫапла ҫав. Пуҫри шухăшсем пуҫěпех пěтерме пултараҫҫě ҫынна!

НАМАНКАН К. И.

# Ҫур кунне.



— Вăрлăх ҫитмест пек туйăнаĭ. Кěркунне ерех туса ěҫкеленисем аса килеҫҫě.

# Ҫилленет.

— Микита пиҫҫе! Сан ҫинҫен „Капкăнра“ ҫырнă.

— Мěн ҫинҫен, мěн тесе ҫырнă-ха?

— Вăрттăн, паттентсăр ашпа сутă тăват, тесе.

— Кам ҫырнă? Мěн йатлăскер?

— Иалкор ҫырнă.

— Иакор ҫырнă? Кам Йакорě?

— Иалкор ҫырнă.

— Шуйттан! Ҫав Ҫана Иакорě ҫырнă. Ҫавах, ҫавах ҫырнă. Налокран пытарса хăварнă вěллесем ҫинҫен те вăлах пěлтернě. Тавăрăпиха еп ку Ҫана Иакорне!

АМĂВ.

# К ĕ п е р.



**ТОКЛАТҪЁК:** Йулташсем, сутуилӳпе копператси ĕçĕ вăл йалпа хулана пĕрлештерекен кĕпер. Пирĕн çав хулапа йал хушшинҫи кĕпере кунран кун çирĕплетсе пырас пулать.

**ИТЛЕКЕН:** Санăн сăмахсем питĕ тĕрĕс ĕнтĕ. Епĕ те çав хула çулĕ çинҫи кĕпере çĕнетес тесе тем ҫул калани. Анҫах йусас текенсем çук.

---

## Санкомиççисем, ăçта есĕр?

Пасар пысăк, тем те пур.
Илес тесен пыл та пур
Каткипех.
Катки çине лăнк уртăнса
Хуçи тăрать хумханса
Шыв хумле.
Ăснă пылне йăпăлт хыпать
Ҫĕлхипеле сăтăрса
Калакран.
Тути-çăвар, пупленипе,
Çăра кăпăк ик йенҫе
Сурҫăкпа:
Вĕт çăмăр пек тек пĕрхĕнет
Хăй шăлҫ витĕр каткана,
Пыл çине.
Халăх темле кăна курмасть,
Хупăрланать пыл илме
Васкаса.

ЙАРУШКА.

## Икĕ тус.

Тĕл пулҫĕç ик пйанҫук.
Ыталарĕç пĕрпĕрне.
Хĕпĕртесе ĕçмешкĕн
Карĕç пивнойа.
Пуçларĕç унта харкашма...
Хыттăн тăпăлҫĕç.
Ĕмĕрлĕхе тăшманăн
Иккĕш уйăрлҫĕç.

Сокколов.

* * *

— Сирĕн копперативра пулă мĕн ҫул тăрать?
— Хаклă. Кĕренкки 15 пус.
— Ой-ой-ой! Ытла та хаклăçке!
— Сирĕн копперативра мĕн ҫул тата?
— 5 пус анҫах.
— Мĕнле пит йӳнĕ апла?
— Патне пымалли çук шăршă.

Амăв.

## Шапа.

Тухрĕ пĕр шапа
Кӳлĕ хĕрнелле,
Пуҫа каҫăртса
Иурлаҫ йуррине:
Ма-ка-кка-ка-как!
Пăхаҫ ҫӳлелле.
Мурра мурра-а!
Ҫын курнаҫ ҫӳлте.
Шапа кăмăлпа
Шăратаҫ йурра,
Симĕс сăнĕпе
Варлаҫ ҫырана.
Ҫын ҫăтаймасҫ—ҫулпа
Ҫапаҫ шапана:
Пĕт ес, пĕт шапа,
Ан варла ҫырана!
Анҫах, шапа кĕҫ
Каллех кăшкăраҫ,
Ҫын ҫине вăл кĕҫ
Ҫăтас пек пăхаҫ.

———

Ҫавăн пек хăш ҫух
Иалти пуйансем:
Советран пăрсан та
Илтнеҫ йуррисем.

АКСАИ М.

## Сăмаххи сахал—хуйхи пысăк.

Аҫи:—Атте теп, атте! Есĕ шалу 90 тенкĕ илетĕп, теттĕнҫке, пайан ма 60 анҫах илтĕн. Виҫҫĕмĕш пайĕ ăҫта?

Ашше:—Пысăклан. Унҫух ху та пĕлĕн.

## Саплăк.

Упăшки:—На-ха, матка, ҫак шалавара сапласа пар.

Арăмĕ:—Мĕнпе саплас—килте нимле сукна татăкĕ те ҫук вĕҫ.

Упăшки:—Ну ҫăвапатне еппин. Ҫитес ернере Шупашкара каймалла пулаҫ, пĕр саплăклăх сукна тупса килĕп-килĕпех. Ун ҫух саплăн.

Р—и.

## Хăравҫă.

Йалĕҫтăвком претҫетаттĕлĕ: Ҫав кушака урама ак йарăрха. Атту вăл йалан иртен-ҫӳрен ҫын ҫулĕсене татса ҫӳрет. Претҫетаттĕл кушакĕ ҫынсем умĕнҫи телейсене пуҫтарса ҫӳрет тесе, хаҫат ҫине ҫырса парсан, мĕн тăвас тетĕн есĕ?!..

## Йăвăр ĕҫсем.

— Есĕ пĕлтĕр уйесра ĕҫлеттĕн, халĕ ăҫта ара?..

— Халĕ районта.

— Мĕнле, ĕҫсем уйесринҫен йавăри?...

— Турттарса нăхман. Хăш пĕр «дело»сен хулăнĕш уйесринҫен кайах пулас ҫук.

Р—и.

# Шăнкăрт укҫа пулĕши?

Ҫăпта ҫапакан копператтив ҫленĕсем, вăхăтра укҫа илейменшĕн, ӳпкелешеҫҫĕ. (Иалкор).



Ак, шуйттан! Ҫак патака ҫĕклĕме те вăйăм йулмарĕ хуҫ. Вăй ҫитет пулсан илмелли укҫана тытса тăракан волокитҫĕксен пуҫĕсене ҫапса салатас килетҫĕ.

# „Капкӑна“ ырласа.

Пуйан хушат̆ куххаркине
Ҭасрах ҫиме илсе килме.

Кухharкӑ ҫиме илсе килмест̆,





Кухharкӑ ҫиме илсе килмест̆.
Таҫта вулат̆ „Капкӑна“.
Пуйан хушат̆ пĕр аҭана
Кухharкӑна ҭĕнсе килме.
Кухharкӑ ҫиме илсе килмест,

Аҭа ӑна ҭĕнсе килмест,
Тарҫӑ пӑхмаҫ вĕсем ҫине,
Вулаҫҫĕ пĕрле „Капкӑна“.
Пуйан йарат̆ куҭӑрне
Виҫĕшне те хĕртсе килме
Кухharкӑ ҫиме илсе килмест





Аҭа ӑна ҭĕнсе килмест—
Вулаҫҫĕ пĕрле „Капкӑна“.
Пуйан хушат̆ тарҫине
Вĕсем ӑҫтине пĕлсе килме

Аҭа ӑна ҭĕнсе килмест,
Тарҫӑ пӑхмаҫ вĕсем ҫине,
Куҭӑр маннӑ вĕсене хĕртме
Вулаҫҫĕ пĕрле „Капкӑна“
Вара пуйан тарӑхнипе
Карĕ столовӑйа апат ҫиме.
Кухharкӑ ҫиме илсе килмест
Аҭа ӑна ҭĕнсе килмест,




Тарҫӑ пӑхмаҫ вĕсем ҫине,
Куҭӑр маннӑ вĕсене хĕртме,

Пуйан ҫимест те ĕҫмест те,
Вулаҫҫĕ пĕрле „Капкӑна“.

СОКОЛĂВ.

Отв. редактор **А. Золотов.**


Чувашлит № 178 Чебоксары, тип. „Чувашская Книга“.